42-8
6282

# ОБОРОНА ХАЛӐХ КОМИССАРӖН ПРИКАЗӖ

## № 55

1942 ҫ. ФЕВРАЛӖН 23-мӗш. МУСКАВ хули.

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1942

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары





# ОБОРОНА ХАЛĂХ КОМИССАРĔН ПРИКАЗĔ

№ 55

1942 ç. ФЕВРАЛĔН 23-мĕш. МУСКАВ хули.

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1942

***Юлташсем—красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, партизансемпе партизанкăсем!***

Хĕрлĕ çар 24 çул тултарнине пирĕн çĕршыври халăхсем хамăрăн тăван çĕршывăн пурнăçĕпе ирĕклĕхĕ çине сĕмсĕррĕн те ирсĕрĕн тапăннă фашистла Германие хирĕç пыракан вăрçăн хаяр кунĕсенче кĕтсе илеççĕ. Хĕрлĕ çарпа Тинĕс-çар флочĕн боецĕсем, хамăрăн çĕршывран нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хăваласа кăларас тата хамăрăн тăван çĕршывăн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварас тесе, Çурçĕрти Пăрлă океанран пуçласа Хура тинĕс патне çити сарăлса выртакан питех те вăрăм фронт тăршшĕпех хаяр çапăçусем туса пыраççĕ.

Пирĕн тăван çĕршыва тăшмансем тапăннинчен хўтĕлеме Хĕрлĕ çарăн пĕрремĕш хут мар тивет. Хĕрлĕ çара 24 çул каярах, пирĕн çĕршыва пайăн-пайăн ваклама тата унăн никама пăхăнманлăхне пĕ-

терсе тăкма тăрăшнă ютçĕршыв интервенчĕсен-захватчикĕсен войскисене хирĕç кĕрешме тунă. Хĕрлĕ çарăн çамрăк отрячĕсем, вăрçа малтанхи хут пырса кĕнĕскерсем, 1918 çулти февралĕн 23-мĕшĕнче Псковпа Нарва патĕнче нимĕç захватчикĕсене тĕппипех аркатса тăкнă. Шăпах çавăнпа ĕнтĕ 1918 çулти февралĕн 23-мĕш кунне Хĕрлĕ çар çуралнă кун тесе пĕлтернĕ. Çав вăхăтранпа Хĕрлĕ çар ютçĕршыв интервенчĕсене-захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре ӳссе тата çирĕпленсе пычĕ. Вăл 1918 çулта нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçса, вĕсене Украинăпа Белоруссi çĕрĕсем çинчен хăваласа кăларса пирĕн тăван çĕршыва сыхласа хăварчĕ. Вăл 1919—1921 çулсенче Антантăн ютçĕршыв войскисене хирĕç çапăçса, вĕсене хамăрăн çĕршывран хăваласа кăларса пирĕн тăван çĕршыва сыхласа хăварчĕ.

Граждăн вăрçи тапхăрĕнче ютçĕршыв интервенчĕсене-захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкни Совет Союзĕнчи халăхсене нумай вăхăтлăха мир туса пачĕ тата мирлĕ строительствăра ĕçлеме май пачĕ. Мирлĕ строительствăн çак çирĕм çул хушшинче пирĕн çĕршывра социализмлă промышленность тата колхозлă ялхуçалăхĕ пулса тăчĕ, наукăпа культура ӳссе чечекленчĕç, пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕ çирĕпленчĕ. Анчах та тăшмансем пирĕн çĕршыв çине çĕнĕрен килсе тапăнма пултарасси çинчен

Совет халăхĕ нихăçан та манман. Çавăнпа та промышленноçпа ялхуçалăх тата наукăпа культура ÿссе пынипе пĕр вăхăтрах Совет Союзĕн çар вăй-хăвачĕ те ÿссе пычĕ. Çак вăй-хăвата ĕнтĕ ют çĕрсене юратакансенчен хăшпĕрисем хăйсен çурăмĕ çинче тÿссе курчĕç. Çак вăй-хăвата халĕ нимĕçсен мухтаса пĕтернĕ фашистла çарĕ тÿссе курать.

8 уйăх каярах фашистла Германи пĕрпĕрин çине тапăнмалла марри çинчен тунă договора сĕмсĕрĕн те ирсĕрĕн пăсса, пирĕн çĕршыв çине ултавлăн тапăнчĕ. Хĕрлĕ çара пĕрре пырса çапнă хыççăнах вăл арканса кайĕ тата хирĕç тăрас пултарулăхне çухатĕ, тесе шутланă тăшман. Анчах тăшман питĕ пысăк йăнăш турĕ. Вăл Хĕрлĕ çарăн вăйĕсене шута илмен, Совет тылĕн çирĕплĕхне шута илмен, пирĕн çĕршыври халăхсем çĕнтерÿшĕн кĕрешме хатĕр тăнине шута илмен, фашистла Германин Европăри тылĕ шанчăксăррине шута илмен, вăл, юлашкинчен, фашистла Германипе унăн çарĕн шалти вăйсăрлăхĕсене шута илмен.

Вăрçăн малтанхи уйăхĕсенче, нимĕç фашисчĕсем кĕтмен çĕртен тата сасартăк тапăннине пула, Хĕрлĕ çарăн ирĕксĕрех чакмалла, Совет территорийĕн пĕр пайне хăвармалла пулчĕ. Анчах та чакнă чухне вăл тăшманăн вăйне хавшатса пынă, ăна хаяррăн пыра-пыра çапнă. Хĕрлĕ çарăн

боецĕсем те, пирĕн çĕршыври халăхсем те пирĕн çар вăхăтлăха çеç каялла чакни пирки, тăшмана тытса чарасси пирки, унтан вара ăна аркатса тăкасси пирки нимĕн чухлĕ те иккĕленмен.

Вăрçă пынă вăхăтра Хĕрлĕ çара çĕнĕ чĕрĕ вăйсем хутшăнса пычĕç, çынсем тата техника хутшăнса пычĕ, резервран хăйне пулăшма вăл çĕнĕ дивизисем илсе тăчĕ. Вара çавтери пысăк фронтăн тĕп участокĕсенче Хĕрлĕ çар наступлени пуçласа ярас вăхăт килсе çитрĕ. Кĕске вăхăтрах Хĕрлĕ çар нимĕçсен фашистла войскисене Дон çинчи Ростовпа Тихвин патĕнче, Крымра тата Мускав патĕнче умлă-хыçлă нах вăйлăн пыра-пыра çапрĕ, Совет столицине хупăрласа илессипе хăратакан нимĕçсен фашистла войскисене Мускав патĕнчи хаяр çапăçусенче Хĕрлĕ çар аркатса тăкрĕ. Хĕрлĕ çар тăшмана Мускав патĕнчен хăваласа ячĕ, халĕ ăна хĕвеланăç еннелле малалла хĕссе пырать. Мускав тата Тула облаçĕсене нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен пĕтĕмпех тасатнă, тăшман вăхăтлăха тытса илнĕ ытти облаçсенчи вуншар хуласемпе çĕршер ялсене ирĕке кăларнă.

Ултавлăн тата кĕтмен çĕртен тапăннă пирки вăрçăн малтанхи уйăхĕсенче пулнă усăллă енсем нимĕçсен текех çук ĕнтĕ. Нимĕçсен фашистла войскисем кĕтмен çĕртен тата сасартăк тапăннă пирки пулнă

резерв пĕтĕмпех расходланса пĕтнĕ. Çапла вара нимĕç фашисчĕсем кĕтмен çĕртен тапăннă пирки вăрçă условийĕсенче пулса тăнă пĕртанмарлăх пĕтсе ларчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăрçă кунçулне кĕтмен çĕртен тапăннă пирки пулнă факторсем мар, яланах пыракан факторсем: тылăн çирĕплĕхĕ, çарăн шухăшкăмăлĕ, дивизисен хисепĕпе пахалăхĕ, çарсене хĕçпăшаллантарни, çарăн начальствующи составĕн организаторла пултарулăхĕсем татса параççĕ. Кунта çак обстоятельствăна та палăртса хăвармалла: кĕтмен çĕртен тапăннă пирки пулнă лайăх самант нимĕçсен арсеналĕнче пĕтсенех, нимĕçсен фашистла çарĕ катастрофа умне тухса тăчĕ.

Нимĕç фашисчĕсем хăйсен çарне никам çĕнтерейми çар тесе шутлаççĕ, вăрçăра пĕчченшерĕн тĕл пулсан вăл пурĕпĕрех Хĕрлĕ çара аркатса тăкать, теççĕ. Халĕ Хĕрлĕ çарпа нимĕçсен фашистла çарĕ пĕрпĕрне хирĕç вăрçăра пĕчченшерĕн çапăçаççĕ. Ку çеç те мар, нимĕçсен фашистла çарне фронтра Итали, Румыни, Финлянди войскисем тӳррĕнех пулăшса тăраççĕ. Хĕрлĕ çарăн халлĕхе çавăн пек пулăшу çук-ха. Мĕн-ха вара? Нимĕçсен мухтаса пĕтерне çарĕ поражени тӳсет, Хĕрлĕ çар пысăк ăнăçусем тăвать. Хĕрлĕ çар вăйлăн пырса çапнине пула нимĕç войскисем Хĕвеланăç еннелле чакса пырса çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк сухату-

сем тӳсеҫҫӗ. Вӗсем хӑйсем арканса каяс куна малалла тӑсас тесе, кашни рубежрах тытӑнса тӑма хӑтланаҫҫӗ. Анчах та тӑшман ахалех тапаҫланать. Пуҫарулӑх халӗ ӗнтӗ пирӗн алӑра, Гитлерӑн тутӑхса хавшаса ҫитнӗ машини темле тӑрӑшсан та Хӗрлӗ ҫар хӗснине тытса чарма пултараймасть. Хӗрлӗ ҫар вӑйлӑн пырса ҫапса тискер тӑшмансене Ленинград патӗнчен хӑваласа ярас, Белоруссипе Украинӑн, Литвапа Латвин, Эстонипе Карелин хулисемпе ялӗсене тӑшманран тасатас, Совет Крымне ирӗке кӑларас, пӗтӗм Совет ҫӗршывӗ ҫинче хӗрлӗ ялавсем каллех ҫӗнтерӳллӗн ялкӑшма тытӑнас вӑхӑт инҫе мар ӗнтӗ.

Анчах та халӗ тунӑ ӑнӑҫусемпе лӑпланса ларни, нимӗҫ войскисене пӗтерсе тӑкнӑ тесе шутлани каҫарма ҫук йӑнӑш пулнӑ пулӗччӗ. Ку вӑл вырӑнсӑр мухтанни тата каппайни, Совет ҫыннисене тивӗҫлӗ мар ӗҫ пулнӑ пулӗччӗ. Малашне татах та нумай йывӑрлӑхсем пуррине манма юрамасть. Тӑшман поражени тӳсет, анчах та ӑна аркатса тӑкман-ха, унтан та ытларах,—ӑна пӗтерсе тӑкман-ха. Тӑшман вӑйлӑ-ха. Ӑнӑҫусем тӑвас тесе, вӑл юлашки вӑйӗсене пухӗ. Вӑл мӗн чухлӗ ытларах поражени тӳсӗ, ҫавӑн чухлӗ ытларах тискерленсе пырӗ. Ҫавӑнпа та пирӗн ҫӗршывра фронта пулӑшмашкӑн резервсем хатӗрлессине пӗр минутлӑха та вӑйсӑрлатмалла мар. Урсӑ кайнӑ тӑшмана ҫӗнтермешкӗн пӗрмаях ҫӗ-

нĕрен çĕнĕ çар чаçĕсем фронта пырса тăни кирлĕ. Пирĕн промышленноçăн, уйрăмах çар промышленноçĕн икĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлени кирлĕ. Фронт танксем, самолетсем, орудисем, минометсем, пулеметсем, винтовкăсем, автоматсем, боеприпасем кунран кун ытларах та ытларах илсе тăни кирлĕ.

Çакăнта ĕнтĕ Хĕрлĕ çарăн вăйĕпе хăвачĕн тĕп çăлкуçĕсенчен пĕри.

Анчах Хĕрлĕ çарăн вăйĕ пĕр çакăнта кăна мар.

Хĕрлĕ çарăн вăйĕ, чи малтан, çакăнта пулать: вăл захватчикла, империалистла вăрçă мар, отечественнăй, ирĕке кăларакан, тĕрĕслĕхлĕ вăрçă вăрçать. Хĕрлĕ çарăн задачи—пирĕн Совет територине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларасси, нимĕç захватчикĕсен пусмăрĕ айĕнчен пирĕн хуласемпе ялсенчи граждăнсене, вăрçăччен ирĕклĕ тата йĕркеллĕ пурнăçпа пурăннăскерсене, халĕ ĕнтĕ пусмăр айне пулнăскерсене, çаратнипе, юхăнтарнипе, выçлăхпа асапланаканскерсене, ирĕке кăларасси пулса тăрать, юлашкинчен, хамăрăн хĕрарăмсене нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсен мăшкăлĕпе пусмăрĕнчен ирĕке кăларасси пулса тăрать. Çакăн пек задачăран пахараххи, хисеплĕрехhи мĕн пулма пултарать-ха? Нимĕçсен пĕр салтакĕ те: тĕрĕс вăрçă туса пыратăп, тесе калама пултараймасть, мĕншĕн тесен вăл хăйне

ытти халăхсене çаратассишĕн, пусмăрлассишĕн çапăçтарнине курмасăр тăма пултараймасть. Нимĕç салтакĕн вăрçăра ăна хавхалантаракан тата ăна мухтанма май паракан паха та хисеплĕ тĕллев çук. Тата тепĕр майлă та, Хĕрлĕ çарăн кирек хăш боецĕ те хăй тĕрĕслĕхлĕ вăрçă, ирĕке кăларакан вăрçă вăрçни çинчен, вăл хăйĕн тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн вăрçни çинчен мăнкăмăллăн калама пултарать. Хĕрлĕ çарăн вăрçăра паттăр ĕçсем тума хавхалантаракан хăйĕн паха та хисеплĕ тĕллев пур. Отечественнăй вăрçă хăйсен тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕшĕн вилме те хатĕр тăракан пиншер геройсемпе героинясем çуратса кăларнине çакăнпа ăнлантарса памалла та ĕнтĕ.

Çакăнта ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарăн вăйĕ.

Çакăнтах ĕнтĕ нимĕçсен фашистла çарĕн вăйсăрлăхĕ.

Ютçĕршыв хаçачĕсенче хăшпĕр чухне: Хĕрлĕ çар хăй умне нимĕç халăхне вĕлерсе пĕтерес, Германи государствине пĕтерсе тăкас тĕллев лартать, тесе сўпĕлтетеççĕ. Ку вăл, паллах, ухмахла сўпĕлтетни тата Хĕрлĕ çар çинчен ăссăр элек сарни пулса тăрать. Хĕрлĕ çарăн çакнашкал идиотла тĕллевсем çук, пулма та пултараймаççĕ. Хĕрлĕ çарăн тĕллевĕ—нимĕç оккупанчĕсене хамăрăн çĕршывран хăваласа кăларса ярасси тата Совет çĕрне нимĕçсен фашистла захватчи-

кĕсенчен ирĕке кăларасси пулса тăрать. Паллах, Совет çĕрне ирĕке кăларассишĕн пыракан вăрçă Гитлерăн ушкăнне хăваласа ярасси патне е ăна пĕтерсе тăкасси патне илсе пыма пултарать. Ĕç çакăн пек вĕçленнине эпир хапăл тунă пулăттăмăр. Анчах Гитлер ушкăнне Германи халăхĕпе, Германи государствипе пĕрпеклетсе кăтартни кулăшла пулнă пулĕччĕ. Истори опычĕ çакна кăтартса парать: гитлерсем килеççĕ те каяççĕ, Германи халăхĕ вара, Германи государстви вара çав-çавах юлать.

Хĕрлĕ çарăн вăйĕ, юлашкинчен, çакăнта пулать: вăл ытти халăхсене, çав шутрах нимĕç халăхне те, раса тĕлĕшпе курайманни çук, пулма та пултараймасть, вăл пĕтĕм халăхсемпе расăсем çине пĕртан пăхма, ытти халăхсен прависене хисеплеме вĕренсе воспитани илнĕ. Нимĕçсен раса теорийĕ тата расăсене курайманнин практики ирĕке юратакан пĕтĕм халăхсене фашистла Германин тăшманĕсем пулса тăрасси патне илсе çитерчĕç. ССР Союзĕнчи расăсен пĕртанлăхĕн теорийĕ тата ытти халăхсен прависене хисепленин практики ирĕклĕхе юратакан пĕтĕм халăхсене Совет Союзĕн тусĕсем пулса тăрасси патне илсе çитерчĕç.

Çакăнта ĕнтĕ Хĕрлĕ çарăн вăйĕ.

Çакăнтах ĕнтĕ нимĕçсен фашистла çарĕн вăйсăрлăхĕ.

Ютçĕршыв хаçачĕсенче хăшпĕр чухне:

Совет çыннисем нимĕçсене, шăпах ĕнтĕ вĕсем нимĕçсем пулнă пирки, кураймаççĕ, Хĕрлĕ çар нимĕç салтакĕсене, шăпах ĕнтĕ вĕсем нимĕçсем пулнă пирки, пĕтерсе тăкать, нимĕçсене пурне те курайман пирки Хĕрлĕ çар нимĕç салтакĕсене тыткăна илмест, тесе сўпĕлтетеççĕ. Ку та, паллах ĕнтĕ, çавăн пекех ухмахла сўпĕлтетни, Хĕрлĕ çар çинчен ăссăр элек сарни пулса тăрать. Хĕрлĕ çарăн расăсене кураймасăр тăни çук. Вăл çавăн пек ирсĕр туйăмсенчен ирĕклĕ, мĕншĕн тесен вăл расăсем çине пĕртан пăхма, ытти халăхсен прависене хисеплеме вĕренсе воспитани илнĕ. Кунсăр пуçне, расăсене курайманшăн пирĕн çĕршывра закон тăрăх айăпланине те манма юрамасть.

Паллах, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене, вĕсем пирĕн çĕршыва чуралантарма тăрăшаççĕ пулсан, е тата пирĕн войскăсем çавăрса илнĕ чухне хĕçпăшала пăрахса тыткăна парăнма килĕшмеççĕ пулсан, Хĕрлĕ çарăн вĕсене пĕтерсе тăкма тивет. Вĕсене Хĕрлĕ çар, вĕсем нимĕç çыннисем пулнăшăн мар, вĕсем пирĕн тăван çĕршыва чуралантарма тăрăшнă пирки пĕтерсе тăкать. Хĕрлĕ çар ытти кирек епле халăхăн çарĕ пекех, хăйĕн тăван çĕршывне чуралантаракансене, вĕсем мĕнле нацирен тухнине пăхмасăрах, пĕтерсе тăкма пултарать тата пĕтерсе тăкмалла та. Нумаях пулмасть Калинин, Клин, Сухиничи, Ан-

дреаполь, Торопец хулисенче тăракан нимĕç гарнизонĕсене пирĕн войскăсем хупăрласа илнĕ те вĕсене тыткăна парăнма сĕннĕ, тыткăна парăнсан, вĕсен пурнăçне сыхласа хăварма пулнă. Нимĕç гарнизонĕсем хĕçпăшалсене пăрахса тыткăна парăнма килĕшмен. Ăнланмалла ĕнтĕ, вĕсене вăйпа çапса кăлармалла пулчĕ, çакăнта вара нимĕçсене сахалах мар вĕлерсе пĕтернĕ. Вăрçă вăл—вăрçах. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем тыткăна парăнаççĕ пулсан, Хĕрлĕ çар вĕсене тыткăна илет, вĕсен пурнăçне сыхласа хăварать. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем хăйсен хĕçпăшалне пăрахма килĕшмеççĕ пулсан, вĕсем алла хĕçпăшал тытса пирĕн çĕршыва чуралантарма тăрăшаççĕ пулсан, Хĕрлĕ çар вĕсене пĕтерсе тăкать. Вырăссен аслă писателĕн Максим Горькин сăмахĕсене аса илĕр-ха: „Тăшман парăнмасть пулсан,— ăна пĕтереççĕ“.

Юлташсем—красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, партизансемпе партизанкăсем! Сире Хĕрлĕ çар 24 çул тултарнă ятпа саламлатăп! Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене татăклăнах çĕнтерме Сире сывлăх сунатăп!

Сывă пултăр Хĕрлĕ çарпа Тинĕс-çар флочĕ!

Сывă пулччăр партизансемпе партизанкăсем!

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă çĕршыв, унăн ирĕклĕхĕ, унăн никама пăхăнманлăхĕ!

Сывă пултăр пире çĕнтерӳ патне ертсе пыракан большевиксен аслă партийĕ!

Сывă пултăр аслă Ленинăн никам çĕнтерейми ялавĕ!

Ленин ялавĕпе малалла, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене аркатса тăкма!

**Оборона Халăх Комиссарĕ И. СТАЛИН.**

---

Отв. по изданию И. П. Павлов-Пинер.

Подписано к печати 28/II-42 г. Заказ № 126. Тираж 15000 экз., Объем 0,5 печ. л. НТ 393.

г. Чебоксары, тип. № 1 Упр. издательств и полиграфии при СНК ЧАССР.

# ПРИКАЗ
НАРОДНОГО КОМИССАРА ОБОРОНЫ

№ 55

23 ФЕВРАЛЯ 1942 г.
г. МОСКВА.

---

На чувашском языке

---

ЧУВАШГОСИЗДАТ .1942